ТАНИ ЮН ЮНĔ ЧĔРĔ



• АНДРЕЙ ГРАДОВ КИНОАКТЕР, СВЕТЛАНА БЕРЕЗКИНА ТАТА ТАНЯ ГРАДОВА.

Чăвашсен пĕрремĕш актриси, çĕршывĕпех палăрнă пултаруллă Тани Юн "Мосфильм" ӳкернĕ кинофильмсенче те вылянăскер, хăйĕн юн тăхăмĕсенче паянхи кун та пурăнать. Искусство еткерлĕхне ывăл-хĕрĕсене, вĕсен мăнукĕсене парса хăварнă вăл.



• ПЕТР ГРАДОВ.

ÇАПЛА, пурăнать Тани Юн юнĕ. Иоаким Максимов-Кошкинскипе иккĕшĕ çемье çавăрса Изида хĕр çуратнă. Пĕртен-пĕрскер, чун тĕпренчĕкĕ – вăл хăйĕн ашшĕ-амăшĕн чĕрине амантса хăварса çамрăклах автокатастрофăра вилет. Ытла та йывăр суран хăварнă вăл вĕсен чĕринче. Чипер хĕр пулса çитĕннĕскер, Петр Градов поэта качча тухать, ывăлпа хĕр çуратать: Андрейпе Таня. Юратса çуратнă ачасем яланах илемлĕ пулаççĕ. Вун ултă çул пĕччен пурăнать Петр Градов Изидăна çухатнă хыççăн. Вăл ăна ăсран каймалла юратнă, ун ячĕпе сахал мар сăвă хайланă. Чунĕ çунса кĕлленсен тин ватăларахпа хăйне валли тепĕр мăшăр тупма пултарнă – вырăс хĕрне – Ольгăна качча илнĕ. Çапах та мĕн пур шухăшĕ, аса илĕвĕ, ачисемпе пĕрле пĕр йăвара килĕштерсе пурăнни, поэзи хавхаланăвĕ – йăлтах Изида ячĕпе...

Вĕсен ывăлĕ Андрей Градов – Раççейри паллă киноактер. Ача чухне ăна Максимов-Кошкинскисем хăйсен патĕнче курасшăн пулнă, вăл ытларах унта çитĕннĕ. Метрика кĕнеки çине те Андрее чăваш тесе çыртарнă. А.Градов Мускаври Щукин ячĕллĕ театр училищинчен вĕренсе тухнă. Репетицисенче Андрей питĕ вăр-вар пулнинчен преподавательсем тĕлĕннĕ. Артист тата режиссер ăсталăхне вăл çамăллăн вĕренни – Тани Юнпа И.Максимов-Кошкинский юнĕ унра чупнинче пулĕ. Андрей Градов чылай кинофильмра ӳкерĕннĕ, халĕ те ăна час-часах рольсем сĕнеççĕ: "Место встречи изменить нельзя" кинофильмра вăл Тараскин рольне вылянă, "Берегите женщин" кинора – журналист, каярахпа "Ундина", "Черная богиня" сериалсенче вылять, тĕрлĕ рекламăсенче ӳкерĕнет. Андрей пурĕ 100 ытла кинофильмра тĕрлĕ роль калăпланă. Нумай çĕршывра гастрольте пулнă, ашшĕпе иккĕшĕ час-часах пĕрле тĕл пулусене кайнă. Шупашкара та сахал мар килнĕ.

– Пурнăçра вара вăл питĕ лăпкă, йăваш та ырă кăмăллăскер, – каласа парать вĕсен тăванĕ Светлана Березкина, – илемлĕ арçын, интеллигентлă, хăйне тивĕçлĕ тытма пултараканскер. Таньăпа та, Андрейпе те хутшăнса каласма яланах кăмăллă. Вĕсем чăваш халăхне яланах асра тытаççĕ, хăйсен кукамăшĕ-кукашшĕне – Тани Юнпа И.Максимов-Кошкинские хисепленишĕн савăнаççĕ, хăйсем вĕсен йăхĕнчен пулнишĕн савăнаççĕ, чăваш халăхĕ вĕсене асра тытнипе мухтанаççĕ. Ашшĕ, Петр Градов, вĕсене çак çыхăнăва малалла та аталантарма хушса хăварнă. Ывăлне халалласа, вăл пĕчĕккĕ чухнех, çапла сăвă йĕркисем çырнăччĕ:

Сĕтел хушшинчен тухрĕ те ман
ывăлăм,
симĕс куçлă турă,
Çут тĕнчере никам та калайми
сăмаха びкаларĕ.
Вăл чаплă сăмахсене чăтма
пултараймастчĕ –
тепĕр чухне питех те кутăнччĕ.
Чи хаклă сăмахне вара тӳрех
каларĕ –
"Аттеçĕм, эсĕ Таньăпа иксĕмĕршĕн
анне те пулăн",– терĕ.

Мĕн калас тенине каларĕ,
сăмахсăр та ăнланмаллаччĕ.
Анчах та эп ача пек макăртăм –
Телейлĕ те, телейсĕр те çав
самантра эп пултăм.

Таня та пултаруллăскер, Мускав патшалăх кинематографипе театр искусствин институтне пĕтернĕ, искусствовед. Хăй вăхăтĕнче вăл "Операция "Ы" и другие приключения Шурика" фильмра ӳкерĕннĕ: унта Шурик Таньăна, çулталăкри пĕчĕк хĕрачана пӳлĕмре йăтса çӳрет Хальхи вăхăтра ашшĕн Петр Градовăн тата кукамăшĕпе кукашшĕн архив ĕçĕсемпе ĕçлет, йĕркене кĕртет, тĕрлĕ хуласенчи паллă çынсемпе нумай çыру çӳрететет. Сăвă та çырать. Упăшкипе, Сергейпе, ывăл çитĕнтереççĕ. Ăна кукашшĕ ятне панă – Петр Градов. Мăнукĕ кукашшĕ ячĕпе Севастопольте теплоход пуррине те, унăн Раççейĕпех паллă "Легендарный Севастополь" гимнне те пĕлет, Максимов-Кошкинскисен еткерлĕхне малалла тăсать. Искусствăна парăнса ĕçленĕ çынсен çемйинче пултаруллă тепĕр çамрăк çитĕнет. Унăн юнĕнче Тани Юн юнĕ чупать.

Петр Градов мĕн ĕмĕр тăршшĕпех хăйĕн пурнăçне Чăваш Енпе çыхăнтарнă, чăваш поэчĕсен сăввисене вырăсла куçарнă, хăех вулянă, Чăваш радио фондне парнелесе хăварнă. Унăн ячĕ Максимов-Кошкинскисемпе пĕрле яланах чăваш халăх асĕнче те упранĕ. Вăл çырнă нумай сăвва композиторсем юрра хывнă, вĕсем Раççей культурин ылтăн фондне кĕнĕ – "Пропел гудок заводской", "Когда уходит женщина", "Вечерний вокзал" тата ытти те. Унăн юррисем Л.Зыкина, И.Кобзон, Г.Отс, Л.Лещенко, Т.Шмыга репертуарĕнче сахал мар пулнă. П.Градов – темиçе мюзикл тата 30 сăвă кĕнеки авторĕ. Вăл Раççейри эстрада программисен тата уяв концерчĕсен сценарийĕсене хатĕрленĕ, Раççейри тĕрлĕ облаçсенче, наци республикисенче иртнĕ драматургсен семинарĕсен ертӳçи пулнă. Вăлах Пĕтĕм Союзри 1968, 1970, 1973, 1977, 1999 çулсенчи тата Пĕтĕм Раççейри ултă юрă конкурсĕсен лауреачĕ пулнă.

Светлана Березкина килĕнче Петр Градов ăна парнеленĕ "Ты и море" кĕнеке упранать. Ăна П.Градовăн тăванĕсем Светлана Ивановна унăн еткерлĕхне тивĕçлипе упраса-йĕркелесе пынăшăн парнеленĕ. Унта С.Островой поэт çырнă рецензире çапла калать: "Эпĕ хамăн тусăмăн пултарулăх анлăхĕнчен вĕççĕрех тĕлĕнетĕп". П.Градовăн сăввисенче çепĕç лирика та, кулăш та, гражданла тема та пысăк пĕлтерĕшлĕ:

Мухтав пусмипе хăпарма
сĕкĕнместĕп,
Килĕшет ытларах флейтăпа
параппан.
Поэзийĕм! Эп – сан салтаку,
пĕлетĕп,
Майор та, сержант, ефрейтор
пулман.

– Салтак? Епле-ха пĕр чапсăр,
хисепсĕр?
Илтетĕп эп йĕкĕлтемĕш ыйту.
Маншăн çынлăх хаклăрах,
илтсемĕр!
Вăл – чапран çĕр хут çӳллĕ
сăрт-ту.

Çирĕммĕш ĕмĕрĕн мĕн пур
ыйтăвне
Эпĕ пĕртен-пĕр унпа
улăштарăттăм –
Çынна çын пулнишĕн юрат
этемле
Май пур таран пулăш кăштаххăн.

Тани Юнăн тăванĕн хĕрĕ – Светлана Ивановна Березкина, Шупашкарта пурăнаканскер, вĕсен çемйин пултарулăх еткерлĕхне пирĕшти пек упраса пурăнаканскер, çак материала хатĕрлеме нумай пулăшрĕ. Вăл пĕр самантлăха та хăйĕн таса тивĕçне манмасть, Тани Юнпа Иоаким Максимов-Кошкинскисен вил тăприне вăтăр çула яхăн ĕнтĕ пăхса тăрать. Çав самантсенчен пĕринче çуралнă та унăн Тани Юна халалланă сăвви.

ЮРАТНĂ ТАНИ ЮН АКТРИСĂНА ХАЛАЛЛАСА

Инçет çăлтăр çути
Çаплах-ха çунать.
Инкексен ахрăмне
Сас парса таварать.

Кинолента çинче
Эс çаплах çулăм пек –
Юланутçă-пике,
Куç хӳри – вĕлт çиçет.

Чун пăлханчĕ епле
Çав сăна ас илсен.
Эс çаплах, ав, вĕçен
Экранран – ĕмĕрсен ĕмĕтне.

/Сăвăсене автор куçарнă/.

Çав вăхăтрах унра хăйĕнче те искусство вучĕ тĕлкĕшет. Ахăр, Тани Юн юнĕ канăç памасть. Светлана сăвăсем çырать, кĕнеке валли хатĕрлет. Унăн хăш-пĕр сăввине Василий Кервен чăвашла куçарнă. Акă вĕсенчен пĕри:

ТĔЛĔКĔМРЕ

Тĕлĕкĕмре
паян мана
Шур парăс евĕр курăнатăн.
Тĕлĕкĕмре
санпа пĕрле
Çула тухмашкăн туртăнтăм.
Тĕлĕкĕмре эс пăшăлтатнăччĕ.
Тĕлĕкĕмре
телей енне
Пĕрле ишме те тухрăмăр.
Йăлт урăхла-çке пурнăçра –
Хăпмасть инкек те тунсăхăм.

Людмила САЧКОВА.